*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

81 (2493) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕ КУН

2014,
юпа, 17

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ **КИЛ** ХЎТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ



Игнатий атте Коваленко çемйипе

Алексей РЫЖОВ сăн ÿкерчĕкĕ

**Юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче 11 сехетре Шупашкарта, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче, ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсене чыслаççĕ. Районсенчен делегацисем килсе çитĕç: республикăри паллă механизаторсем, уй-хир ĕçченĕсем, ĕне сăвакансем тата ытти ĕçченсем. Пысăк çитĕнÿсем тунă ял хуçалăх организацийĕсене, хресчен (фермер) хуçалăхĕсене, хушма хуçалăх тытса пыракан уйрăм çынсене дипломпа укçан преми парса хавхалантарĕç.**

**ПАЯН** кун тăршшĕ 10 сехет те 20 минут. Уйăх катăлса пырать.

Ерофей кунĕ. Çак кунран çанталăк сивĕтме тытăннине кура «хĕл кĕрĕк тăхăнать» тенĕ. Тем пек кирлĕ пулсан та вăрмана кайма хушман, арçури тĕлне пуласран шикленнĕ.

**ЫРАН** – Харитина кунĕ тĕлне уй-хир, пахча ĕçĕсене вĕçленĕ. Хĕрарăмсем ал ĕçĕ тума тытăннă, арçынсем – кăçатă йăвалама. Ула кураксем сывлăшра явăнни, пĕлĕтсем çиле хирĕç шуни юр çăвасса систернĕ. Çилсĕр çанталăк – сивĕтессе.

**ВИÇМИНЕ** – Фома кунĕнче – çултаăка пĕтĕмлетнĕ. Пухса кĕртнĕ тыр-пула хĕл каçипе мĕнлерех усă курмаллине палăртнă.

## «Килех чун туртать, анчах...»

**– Ывăлăм, пире Чăваш Республикине яраççĕ. Ăçтарах вырнаçнă-ши вăл, пĕлме тăрăш-ха, – тенĕ амăшĕ Украинăра юлнă аслă ывăлне шăнкăравласа. Кăштахран хурав илтнĕ:**

**– Таçта, кăнтăр енче.**

**Çĕр чăмăрĕ çинче Чăваш çĕршывĕ пуррине Елена Коваленко пĕлмен те. Вăрçăран тарса вăрăм çула тухнăскерĕн пĕртен-пĕр тĕллев – ачисене упраса хăварасси пулнă. Украинăрах юлнă аслă ывăлĕ аптрамĕ. 27 çулти йĕкĕт тахçанах уйрăм пурăнать. Çумрисем вара çунатланса кăна пыраççĕ: Настя – 16, Никитăпа Толя 13-14 çулсенче.**

ЎССЕ ĔЛКĔРЕЙМЕН ЧĂХ-ЧĔП

Елена Коваленко Луганск облаçĕнчи Суходольск хулинче, уйрăм çуртра пурăннă. Мăшăрĕнчен вунă çул каяллах уйрăлнă. Иккĕмĕшле чĕр тавара вырнаçтарассипе ĕçленĕ. Анчах кивĕ хут, пластмасса, тимĕр-тăмăр сутса алла нумаях укçа кĕмен. Пурнăçа сыпăнтарса пыма алимент укçи пулăшнă. Кил хуçалăхĕ хула хĕрринче вырнаçнăран сысна, чăх-чĕп, качака усрама, теплицăра хăяр, помидор ўстерме никам та чăрмантарман.

Малтанлăха Раççее август уйăхĕ çитмесĕр те каяс темен Елена. Ара, бройлерĕсем те пусмалăх ўссе ĕлкĕреймен-çке, пахчине те тирпейлемелле. Ачисене кăшт маларах тăванĕсем патне Волгоград облаçне ăсатнăскер, лару-тăру кăшт та пулин лайăхланасса кĕтнĕ. Анчах снарядсем çывăхрах та çывăхрах çурăлма пуçланă. Юнашарсен çурчĕ çине бомба ўксен, йывăр сурана пула кўрши больницăран çут тĕнчерен уйрăлсан шухăшĕ улшăннă. Счастье хулинче çынсене касса тухса кайнине пĕлĕшĕ пĕлтерсен текех самант та тытăнса тăрас темен. Ачисен велосипечĕпе пысăкрах чăхсене сутса çула тухмалăх укçа тупнă. Хуçалăхне ашшĕ-амăшне пăхса тăма хушса хăварнă.

**– Нумайăн тухса кайрăр-и?**

– Пире никам та пухман. Кам мĕнле пултарнă – çапла тухса кайнă. Июлĕн 20-мĕшĕнче эпĕ пĕччененех такси чĕнсе илтĕм. Таксистсем ополченецсемпе çыхăннине, вĕсем пире хўтĕлленине пĕлнĕ.

3-мĕш стр. ➔

ПАХЧИ-ПАХЧИ

## Халех акса хăварар

Çуркунне ĕç нумай. Тепĕр чух вăл еку çимĕçе акса хăварма та вăхăт юлмасть. Кĕркунне, тухăçа пухса кĕртнĕ хыççăн, пушă вăхăт тупма май пур. Апла сивве чăтакан культурăсене мĕншĕн хĕл умĕн акас мар. Акнă вăрлăх хĕл пуçланиччен шăтса ан тухайтăр çеç.

Çанталăк сивĕтсен, çĕр кăшт шăнсан малтанах хатĕрлесе хунă йăрансене сивве чăтакан кишĕр, редис, кăшман, укроп, петрушка, салат, кăшкар ути, сухан акса-лартса хăвармалла. Çиелтен торфпа, çĕрĕк тăприпе е лайăх çĕрсе çитнĕ компостпа витмелле.

Юпа уйăхĕнче акнă вăрлăх çур пуçламăшĕнче акнинчен икĕ-виçĕ эрне маларах шăтса тухать.

Чечек клумбисене туса хăварни те пăсмĕ. Калăпăр, дельфиниум, гвоздика, бархатцы акма юрать. Тюльпанпа гиацинт паранкине лартма та манар мар.

Эксперимент вырăнне пĕрер йăран çĕр улми те лартма юрать. Малтан паранка хĕвел çинче симĕслентермелле, çапла тусан уншăн нимĕнле сивĕ те хăрушă мар. Хĕлле вăл витĕр шăнсан та çуркунне аванах шăтса тухать. Кĕрхи çĕр улмине нимĕнпе те витмелле мар.

## Ан кăшлаччăр

**Сад пахчине хĕле хатĕрлесе сивĕрен тата кăшлакан чĕр чунсенчен хўтĕлемелле.**

Час-часах çамрăк улмуççипе груша йывăçĕсем шар кураççĕ. Вĕсен хуппи çўхе, турачĕсем черчен. Йывăçа хўтĕлеме ăна шуратнинчен пуçламалла. 10 л шыва 2,5 кг извеç тата 0,5 кг пăхăр купоросĕ ямалла, унтан 100 г столяр çилĕмĕ хушса пăтратмалла. Яка хупăллă çамрăк йывăçсене шуратма кирлĕ мар. Хĕллехи хĕвелтен хўтĕлеме йывăça шыв яман сăрăпа та (водоэмульси) сăрлама юрать. Сăрă пулмасан çамрăк вулăсене шурă пергамент хучĕпе чĕркеме май пур. Улма-çырла йывăçĕсене 12-15 çула çитиччен кăшлакан чĕр чунсенчен хўтĕлесе хыр-чăрăш турачĕсемпе çыхмалла. Рубероидпа толь усă курни те аван, анчах вĕсен айне шăлапир хумалла. Сад пахчинче кивĕ улăмпа çапă купи хăвармалла мар, мĕншĕн тесен вĕсен айĕнче шăши таврашĕ хĕл лайăх каçать.

СĔНЎ-КАНАШ

## Ытлашши туянса ан хурăр

**Минерал удобренийĕ – хими пĕрлешĕвĕ, çавăнпа унпа асăрхануллă пулмалла.**

✓ Сывлăха сиен кўрес мар тесен ăна нихăçан та тутана лектерсе пăхмалла мар, ўпкене е куçа лекесрен сыхланмалла. Удобрение гранулаunion пулсан куçлăхпа тата маскăпа ĕçлемелле.

✓ Минераллă удобрение чĕркемре кăтартнă пек упрамалла. Аммиак селитрине уйрăмах лайăх упрамалла. Ăна хупă пичкере е ятарлă михĕре типĕ вырăнта тытмалла.

✓ Кали удобренийĕ те нўрĕк туртать, çавăнпа ăна азот удобренине упранă пекех çумăртан, юртан, шывран, нўрĕ сывлăшран сыхламалла. Кали удобренийĕ, суперфосфат тата аммони сульфачĕ пир миххе хăвăрт «çинине» шута илмелле.

✓ Аммиак селитрине пăчкă кĕрпипе, улăмпа, типĕ торфпа, хăвăрт хыпса илекен тата ытти япалапа хутăштарма юрамасть – хăйне хальлĕн пушар тухма пултарать.

КИРЛĔ ПУЛĔ

## Апат содипе хăналар

Вулакансем час-часах хытă хуртран е тымар хуртĕнчен (проволочник) мĕнле хăтăлмаллине ыйтаççĕ. Апат содипе усă курса пăхнă-и?

Çĕр улми лартнă чухне кашни паранкăпа пĕрле пĕрер чĕптĕм апат соди хурса пымалла. Çакăн усси пĕрремĕш çулнех палăрĕ, анчах хурт личинки çĕр ăшĕнче виçĕ çултан кая мар пурăннине шута илсе çĕр улмине виçĕ çулччен апат содипе лартмалла.

## Нўхрепе типĕтме

Нўхрепе çунтарман извеçпе типĕтме пулать. Полиэтиленран çĕленĕ хутаçа 15 кило извеç ярса нўхрепри урайне лартмалла. Шыв пухăнсан ăна тăкмалла, извеçе типĕтсе тепĕр хут усă курмалла. Çапла 12 хутчен нўр пухма пулать. Хăвăрт пулмасан та ку тухăçлă меслет.

Çавăн пекех йывăç кăмрăкĕпе усă курма юрать. Ăна витрене хурса нўхрепе лартмалла. Кăмрăк нўре туртса кăвакăша сарăлма памĕ.

КИЛ-ТĔРĔШРЕ

## Шăши пымĕ

Улма-çырла йывăçĕсене шăши тапăнать-и? Апла çапла туса пăхăр. Малтан йывăç йĕри-тавра фосфорпа кали удобренийĕ хывса кăпкалатмалла. Унтан хайхи çĕре креолин шĕвекĕпе (20 л шывра 1,5-2 кг креолин ирĕлтермелле) йĕпетнĕ пăчкă кĕрпипе мулчаламалла. Çапла туни йывăçшăн та лайăх: пăчкă кĕрпи йывăç тымарне шăнасран хўтĕлет, креолин шăрши вара шăшипе куян тавраршне хăратать.



| ÇАНТАЛĂК | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Шупашкарта | Вăхăт | 17.10 | 18.10 | 19.10 | 20.10 | 21.10 |
| | Температура, $^0$C | 2-4 сехетре | –3 | –4 | –12 | –13 | –7 |
| | | 14-16 сехетре | 0 | –2 | –4 | –5 | –2 |
| | Çумăр çăвать | | ⁂ | – | ⁂ | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | | 748 | 743 | 746 | 742 | 744 |

ХЎТЛЁХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

**Республика пуçлăхĕ Елчĕк районĕнчи Элпуç ялĕнче фельдшерпа акушер пунктне уçнă çĕре хутшăннă. Районти иккĕмĕш ФАП ку. Михаил Игнатьев 2015 çул вĕçленичченх районта çакнашкал 6 çурт пуласса палăртнă. Пĕтĕмпе вара, 2013-2015 çулсенче, республикипе 100 ФАП уçăлĕ.**

**Сывлав çулĕсен вирус инфекцийĕпе (ОРВИ) чирлекенсен йышĕ ўссе пырать. Авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа юпа уйăхĕн 5-мĕшĕччен Шупашкарта чир çаклатнă 5327 çынна шута илнĕ. Чирлекенсенчен ытларах пайĕ (80,3 процент) шкул ўсĕмĕнчи ачасем.**

## УСĂ КУРМА



### Сыпăсем ыратсан

Çур литр спирт çине 2-шер кашăк камфора порошокĕпе (аптекăра сутаççĕ) горчица, лăканă 3 çăмарта шурри ямалла. Холодильникра упрамалла. Ыратакан вырăнсене кунне икĕ хут сĕрмелле. Çапла – хăвăра лайăх туйма пуçличчен.

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Артрит (шăмă сыппин шыççи).** 1) Типĕтнĕ хăмла йĕкелне 2 кашăк чухлĕ илсе 50 г вазелинпа (аптекăра сутаççĕ) хутăштармалла. Çывăрма выртас умĕн ăна ыратакан сыпăсене сĕрсе ăшă тутăрпа çыхмалла.

2) Теркăпа хырнă чĕрĕ хĕрен тымарне пир пусма çине пĕр тикĕс сарса ыратакан вырăна хумалла. Çиелтен полиэтиленпа витсе пусма таткипе çыхмалла. Çапла çунтарма пуçличчен тытмалла.

**Мастит.** 1) Кишĕре вĕтĕ теркăпа хырмалла, сĕткенне кăштах пăчăртаса кăлармалла. Ыратакан кăкăр çине хурса компресс тумалла. Сехете яхăн тытмалла. Çыхха кунне 3 хут улăштармалла.

2) Шăнăр куракĕн вăррине вĕтетсе ăшă шывпа хутăштармалла (пăтă пек пуличчен). Хытса тăракан вырăна унпа кунне темиçе хут та сĕрмелле.

**Остеохондроз.** 1) Тин вĕретнĕ 2 стакан шыва 2 кашăк чухлĕ вĕтетнĕ лавр çулçи ямалла, 3 сехет лартмалла, сăрăхтармалла. Кашни сехетрен сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 3 кун.

2) 3 л шыва 1 стакан вĕтетнĕ хĕвелçаврăнăш тымарĕ ямалла, вĕреме кĕрсен тата 5 минут тытмалла, сивĕтмелле, сăрăхтармалла. Холодильникра упрамалла. 3 литра 3 кунра ĕçсе ямалла. Кунсерен – 1 л. Сиплев тапхăрĕ – 9 кун. Сипленнĕ вăхăтра çуллă, пăрăçлă, йўçĕ, тĕтĕмленĕ апат-çимĕç çиме, çавăн пекех эрех-сăра ĕçме юрамасть. Таса шыв нумай ĕçмелле.

3) Пĕр тан виçепе илнĕ хĕрен сĕткенĕпе шур эрехе хутăштармалла. Çывăрма выртас умĕн ыратакан вырăна сĕрсе ăшă япалапа çыхмалла.

## АЛ АЙĔНЧИ

### Кавăн сĕткенĕ



Хамăра яланах лайăх туяс тесен тăтăшах витамин апачĕ çимелле. Анчах улма-çырлапа пахча çимĕçĕ сахал чухне кĕркуннепе хĕлле йывăрлăхран мĕнле тухмалла-ха? Кун пек чухне сывлăхĕ пирки пăшăрханакансене кавăн сĕткенĕ пулăшĕ. Мĕнрен усăллă-ха вăл?

Унта В, С, Р, РР, Е, К ушкăнри витаминсем, кали, магни, кальци, пăхăр, кобальт, цинк, йод пур.

Кавăн сĕткенĕ хырăмлăхпа пыршăлăх, чĕре ĕçне лайăхлатать, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсенчен пулăшать, шыççа иртерме пулăшнипе тата температурăна чакарнипе паллă, çавăнпах шăнса пăсăлсан тата грипп чухне усă кураççĕ унпа.

Кавăн сĕткенĕ юнра гемоглобин сахаллансан, иммунитет чаксан, час-часах вар хытсан, пĕверпе ват хăмпи чирĕсенчен те пулăшать.

**Мĕнле хатĕрлемелле?**

Хуппинчен тата вăрринчен тасатнă кавăна соковыжималка витĕр кăлармалла. Е теркăпа хырса сĕткенне темиçе хут хутлатнă марля витĕр сăрăхтармалла. Кавăн тутине лайăхлатма лимон е апельсин сĕткенĕ хушма юрать, пĕр тан виçепе илнĕ кишĕр е пан улми сĕткенĕпе хутăштармалла.

Кавăнпа кишĕр сĕткенĕ куç çивĕчлĕхне ўстерет, юна лайăхлатать. Кавăнпа пан улми сĕткенне гиповитаминоз, анеми, апетит япăх чухне ĕçме сĕнеççĕ.

Кавăн сĕткенне ĕçес умĕн çеç кăлармалла, çийĕнчех консервламасан кăшт ларнипех витаминсем арканаççĕ.

**Консервласси**

Тин кăларнă кавăн сĕткенне вĕреме кĕнĕ хыççăн çулăм çинче 4-5 минут тытмалла. Стерилизациленĕ литр банкисене ярса вĕретнĕ хупăлчапа витмелле. «Шыв мунчинче» 7-10 минут тытнă хыççăн хупмалла. Сивĕ вырăнта упрамалла.

**Мĕн чухлĕ ĕçмелле, мĕнле усă курмалла?**

**Пўрепе пĕвер чирĕсенчен.** Кунне 3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, çуршар стакан ĕçмелле. Хăвăра лайăх туйма пуçличчен.

**Гипертонирен, вар хытсан (запор).** Кунне 3 хут, апат умĕн 20 минут маларах, стаканăн пĕрре тăваттăмĕш пайĕ таран.

**Простата.** Кунне 3-4 хут, апат умĕн 30 минут маларах, çуршар стакан ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 1 уйăх.

**Пите шатрашка тухса тулсан, ўте пĕçертсен.** Пир пусмана кавăн сĕткенĕпе йĕпетмелле. Сиенленнĕ вырăнсене унпа кунне икĕ-виçĕ хут (5-10 минут майлă) тытмалла.

***Асăрхаттарни:*** пĕчĕк йўçеклĕ гастрит, хырăмлăх язви, юн хăвăрт çывăрсан, тромбофлебит, сахăр диабечĕ, инсульт, миокард инфаркчĕ пулсан кавăн сĕткенĕпе асăрханса çеç усă курмалла.

**Дина БАЛЯСОВА, фитотерапевт.**

## СИППЕ КАЙТĂР

### Юн тымарĕсене тасатма

Çак хутăш юн тымарĕсене холестерин чăмаккисенчен тата извеç юлашкисенчен тасатма пулăшĕ. Çывăрас умĕн ăна 1 кашăк ĕçсен каçхи ыйхă тутлă пулĕ, ирпе çăмăллăн вăранатăр. Пĕр сăмахпа каласан юн тымарĕсемшĕн вăл щеткăпа танах, нервшăн вара – чăн-чăн сăпка. Каççерен ăна пĕрер чей кашăкĕ чухлĕ ачасене пани те пăсмĕ.

Рецепчĕ çапла: 1-2 шăл ыхрана пускăч витĕр кăлармалла. Тин тунă чăх çăмартине лайăх лăкаса хайхи ыхрапа хутăштармалла. 1 стакан сĕт (качакан лайăххах) хушмалла. Хутăша йăваш çулăм çине лартса вĕреме кĕртмелле. Вĕреме кĕнĕ хыççăн 3 минутран çулăма сўнтермелле.

Хутăш сивĕнсен унта 1 кашăк пыл ярса ирĕлтермелле те кĕленче савăта ямалла. Холодильникра упрамалла. Кунне 3 хут, апат çиес умĕн çур сехет маларах, пĕрер кашăк ĕçмелле. Çапла – хутăш пĕтиччен.



*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

### Укçа хывакансене хавхалантарма

Реклама

**Раççей ял хуçалăх банкĕ уйрăм çынсем валли «Формула успеха» ятпа çĕнĕ вклад уçать.**

Çĕнĕлĕхĕн лайăх енĕ – хывнă укçана вăхăт çитмесĕрех çăмăллатнă майпа каялла илме май пурри. Банка хывнă укçа 3 уйăхран пуçласа 6 уйăхчен илес пулсан çулталăкра 4 процент хушăнать, 6 уйăхран пуçласа 9 уйăхчен – 5 процент, 9 уйăхран 12 уйăхчен – 6 процент, 12 уйăхран 18 уйăхчен – 7 процент. Çапла майпа, банка укçа хывакансем виçĕ уйăх иртнĕ хыççăнах хăйсен укçине кирек хăш вăхăтра та каялла илме пултараççĕ, кăштах тупăшĕ те пулать. Çулталăк çурăлăха хывакансен вара хывнă сумма çумне 9 процент хушăнать.

Çĕнĕ йĕркепе банка укçана 2014 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи февралĕн 9-мĕшĕччен хума юрать.

Акци условийĕсем пирки тĕплĕнрех «Россельхозбанк» сайтне кĕрсе пĕлмелле.

*РФ Тĕп банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*

## ШУТА ИЛМЕ

### Пилĕк аптратсан

Радикулит аптратсан çакнашкал хатĕр пулăшма пултарать: кастрюле çур литр шыв, 3 пуç ыхра ярса вĕреме кĕртмелле те çулăма чармалла. Унтан ыхра шăлĕсене нимĕрлесе пир пусма çине сармалла, пилĕке хумалла. Çиелтен полиэтиленпа витсе çăм тутăрпа çыхмалла.

Çак компреспа кунĕпех çўремелле. Питĕ хытă çунтарсан çывăрас умĕн салтмалла. Чылай чухне çапла пĕрре тунипех ыратни иртет. Кирлĕ пулсан çакнах тепĕр кунне те тума пултаратăр.

### Юн пусăмĕ сикесрен

Вĕретсе сивĕтнĕ 250 мл шыва 2 кашăк лимон сĕткенĕ, 1 кашăк валериана настойĕ (аптекăра илни), 3 кашăк пыл ярса тĕттĕм вырăна лартмалла. Пўлĕмре 5-6 кун тăрăлтарса лартмалла. Кунсерен, апат умĕн çур сехет маларах, 30-40 тумлам ĕçмелле. Пĕр уйăх ĕçсен икĕ эрне канмалла, унтан каллех уйăх сиплентмелле. Çапла виçĕ уйăх сипленнĕ хыççăн юн пусăмĕ сикме, пуç ыратма, чĕре нăйкăшма пăрахĕ.

Юн пусăмне йĕркелеме çакнашкал хатĕр те пулăшать: çур стакан шур çырли ( клюква), пĕрер стакан кишĕр тата хĕрлĕ кăшман сĕткенĕсем, çур стакан шур эрех тата тутă кĕмелĕх пыл илсе хутăштармалла. Тĕттĕм вырăнта 3 кун лартмалла, вăхăт-вăхăтăн силлесе илмелле. Кунне 3 хут, апат умĕн, пĕрер кашăк ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 1,5 уйăх.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Шăнăр туртать

**? Утнă вăхăтрах ура хырăмне шăнăр туртать, кăшт канса илнĕ хыççăн çакă иртет. Мĕнпе çыхăннă-ши ку?**

– Ура хырăмне тăруках шăнăр туртни лапă уралла пулнипе, стресс тўснипе, мышцăсене йывăр килнипе, шăннипе, минерал (магни, кальци, D витамин) çитменнипе, çавăн пекех хăш-пĕр чирпе (венăсем сарăлса тĕвĕленни, сахăр диабечĕ, нерв пăсăлни) çыхăнма пултарнă. Невролог, флеболог (венăсене тĕрĕслекен) тата эндокринолог патĕнче тĕрĕсленмелле. Апата та уяса çимелле, сĕтел çинче ытларах магнипе, кальципе (ешĕл çимĕç, типĕтнĕ улма-çырла, мăйăр, пахча çимĕç, кĕрпе тавраш, пăрса, сĕт-турăх) пуян çимĕç пултăр.

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРЎСЕМ

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**6. Навоз, торф, чернозем, бой** кирпича, песок, гравмассу с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**11. Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозем.** Дешево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20. Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы, **кровля, обшивка** домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74. metalservis21.ru

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, ЗЕРНО, К/КОРМ.** Д-ка. Т. 89613412236.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**77. ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

# «Килех чун туртать, анчах...»

1-мӗш стр.

Чикӗ хӗррине ҫитсе Раҫҫей ҫӗрӗ ҫине утӑм ярса пуссанах хашах сывласа янӑччӗ. Украинӑран каякансене ҫул ҫинчех пере-пере пӑрахнине унчченех илтнӗ, ҫавӑнпа чикӗ хӗррине ырӑ-сывӑ ҫитни хӑех телей пулнӑ. Ростов облаҫӗнчи Донецкра палата хулинче пурӑнтӑмӑр. Анчах унта та снарядсем ҫитме пуҫларӗҫ...

**КУРОРТ – ТРЕНККӐ – МӐН СӖНТӖР**

... Чӑваш ҫӗрӗ вӗҫӗ-хӗррисӗр мӗлтлетсе иртекен хурӑнсемпе, хырсемпе кӗтсе илнӗ. Атӑл юхан-шывӗ – хӑйне евӗр лӑпкӑлӑх кӳнӗ. Малтанлӑха «Чувашия - курорт» санаторие вырнаҫтарнӑ вӗсене. Унта ыр ҫынсем пулӑшнипе ачисене шкула хатӗрлеме тытӑннӑ. Хӗле хирӗҫ ӑшӑ япаласемсӗр юласран хӑранӑскерӗн шикленни кӑлӑхах пулнӑ. «Тӑхӑнса пӗтерейӗнӗр-ши ӗнтӗ», – тет вӑл халӗ хӑйне пулӑшнӑ ҫынсене чунтан тав туса.

Каярах Коваленко ҫемйипе Муркаш районӗнчи Тренккӑ ялне ҫитсе тухнӑ. Суворовсен чаплӑ ҫуртӗнче пурне те вырӑн ҫитнӗ. Паян кун та ҫавӑнтах пурӑнатчӗҫ пулӗ, анчах ачисене тӗрлӗ шкула ӑсатма тивни амӑшне хытах шухӑшлаттарнӑ. Тренккӑра 9 класс таран ҫеҫ вӗрентеҫҫӗ. Арҫын ачасем унти шкула ҫӳренӗ пулсан хӗр ача Мӑн Сӗнтӗре утнӑ. Настьӑна шкула кӑларса ямассерен амӑшӗн ӑшӗ вӑрканӑ. Шкул автобусӗнчен анса юлсан та хӗрӗн тата утмалла-ҫке. Хӗлле мӗнле ҫӳремелле? Мӑн Сӗнтӗр шкулӗн директорӗпе учительсем те йывӑрлӑхран тухма майсем шыранӑ. Ялти чиркӳ настоятелӗ Игнатий атте (Суранов) Украинӑран тарса килнисене хваттере яма хирӗҫ пулманнине пӗлнӗ вӗсем. Ҫитменнине настоятелӗн хӑйӗн те усрава илнӗ ывӑлӗ Настьӑпа пӗр класрах вӗреннӗ. Кассан – турпас, калаҫсан сӑмах пулать тенӗ. Виҫҫӗмӗш эрне ӗнтӗ Коваленкосем Мӑн Сӗнтӗрти чиркӳ ҫуртне килсе тӗпленни.

**ЛӐПКӐЛӐХ, ТӐНӐҪЛӐХ**

– Урӑх ниҫта та каяс килмест. Ҫав тери ырӑ кӑмӑллӑ, ӑш пиллӗ ҫынсем пурӑнаҫҫӗ кунта. Александрпа Анна Суворовсене чӗрен тав. Мӗнле хӗрхенетчӗҫ. Вӗсен умӗнче ӗмӗр парӑмра. Батюшка вара (Игнатий аттене чунтан хисеплесе ҫапла чӗнеҫҫӗ вӗсем) манӑн мӗн пур йывӑрлӑха хай ҫине илчӗ. Документсем хатӗрлесе ҫитерме кӑна унпа Шупашкара миҫе хут кайса килмерӗмӗр-ши? Пенси фондне, ачасен правине хӳтӗлессипе ӗҫлекен уполномоченнӑй патне, Хӗрарӑмсен канашне, сывлӑха сыхлас ӗҫпе социаллӑ аталану министерствине ... Медкомисси витӗр тухма, ӗҫе вырнаҫма пулӑшрӗ. Ачасемпе мӗнле лайӑх вӑл. Никита унран хӑпма та пӗлмест. Хӑйӗн хреснашшӗ те священник пулнӑран-и пӗр вӗҫӗмсӗр ыйту парать ӑна. Лӑпкӑлӑхпа тӑнӑҫлӑх хуҫаланать кунта. Хамӑн та тинех чун вырӑнта.

Елена Анатольевнӑн шыв юххи пек калаҫӑвне, кӑлтӑр-кӑлтӑр куллине итлеме ҫав тери кӑмӑллӑ. Чӑвашсем темессерен хӗрӗх тӑватӑ ҫулти хӗрарӑмӑн сӑн-пичӗ хӗвел пек ҫуталса каять. Калаҫса ларнӑ хушӑрах сӗтел ҫине борщ лартса пачӗ. Украинла пӗҫернӗскер, фасольпе. Ҫавӑнтах винегрет, пулӑпа пӗҫернӗ ҫӗр улми лартрӗ. Пурне те тутанса пӑхма сӗннипе пӗрлех эрнере пӗрре батюшка ывӑлӗсене мунча кӗртнине, хӗрӗпе иккӗшӗ вара кӳршӗре ҫӑвӑннине пӗлтерет. Сӑмах ҫине тенӗ пекех пӳрте пӗр кинемей кӗрсе тӑчӗ. Мунча кӗме чӗнет. Паян ятарласа Украина хӑнисем валли мунча хутса пултарнӑ-мӗн Екатерина Ильгечкина. Хальтерех пырӑр-ха, тесе хӑварчӗ вӑл.

**ЧУНА ШУЙХАТАС КИЛМЕСТ**

– Чӑваш Енрех юлас килет, малалла сыпӑнать калаҫу. Питӗ хитре ҫут ҫанталӑк кунта. Ура айӗнчех кӑмпи те, сиплӗ курӑкӗ те ӳсет. Пирӗн тӑрӑхра сар ҫип ути тупас тесен ай-ай мӗнлерех шырамалла. Йывӑҫ ҫурт та маншӑн питӗ хаклӑ, – тет вӑл ҫуртӑн пӗренисене сӗртӗнсе.

**– Сирӗн хӑвӑрӑн ҫурт мӗнрен вара?**

– Пирӗн патра кирпӗчрен е шлакран хӑпартнӑ ҫуртсем. Хамӑрӑн – шлакран. Йывӑҫ пирӗншӗн темрен те хаклӑ.

**– Тӑвансем патне шӑнкӑравлатӑр-и? Каялла чӗнмеҫҫӗ-и?**

– Атте-аннепе тӑтӑшах калаҫатӑп. Тӑваттӑмӗш уйӑх ӗнтӗ вӗсене пенси тӳлемеҫҫӗ. Юрать, унченхи саппассем, чӑххичӗппи, пахча ҫимӗҫӗ пур. Чылайӑшӗ каяллатавӑраннине, юхӑннӑ ҫуртсене тирпейлеме пуҫланине пӗлтереҫҫӗ. Ҫапах та халӗ унта таврӑнсан мӗнле пурӑнмалла? Ӗҫ ҫук. Ачасене мӗн ҫитермелле? Паллах, чун килех туртать, анчах вӑрҫӑ чарӑнман-ҫке. Пӗччен ҫеҫ пулнӑ пулсан ним те марччӗ. Ачасемшӗн хӑратӑп.

Новосветловкӑра питӗ лайӑх фермер ҫемйи пурӑнатчӗ. Сӗнӳ-канаш ыйтма, сӗтҫу, вылӑх апачӗ туянма ӑстан кӑна пымастчӗҫ вӗсем патне. Хам та ҫӳренӗ. Сывах-ши вӗсем? Усал хыпар илтесрен шӑнкӑравламастӑп. Унта пӗтӗмпех аркатнӑ терӗҫ. Телевизор та пӑхмастӑп. Чуна шуйхатас килмест. Каятӑп, ҫаврӑнса та пӑхмастӑп тесе туха кайнӑччӗ килтен. Кайран ялан макӑраттӑм, уйрӑмах тӑвансемпе калаҫнӑ хыҫҫӑн. Халӗ лӑпланса ҫитрӗм. Пурнӑҫ малалла. Муркашри чӑхчӗп фабрикинче ӗҫлеме пуҫларӑм.

**«ЙӐНӐШПА ПЕНӖ»**

Коваленкосен ачисем пӗрин хыҫҫӑн тепри шкултан килсе ҫитрӗҫ. Пӳрт самантрах тулса ларчӗ.

**– «Пиллӗксем» илсе килтӗр пулӗ-ха,** – тетӗп кӗҫӗннине, Никитӑна, тинкерсе.

– Паян «пиллӗк» илмелли уроксем пулмарӗҫ ҫав. Ӗнер вара илнӗччӗ, – тет вӑл шавлӑн кулса. – Геометрипе, алгебрӑпа, чӑваш чӗлхипе.

**– Чӑваш чӗлхипе те-и?**

– Аха, мана тӑван тӑрӑх ҫинчен калакан икӗ кӗнеке панӑ. Вуланӑ хыҫҫӑн мӗн ас туса юлнине вырӑсла калатӑп та «пиллӗк» лартса параҫҫӗ.

Настя вара химипе «виҫҫӗ» илнине пӗлтерет. Унтан шӑтарасла куҫран пӑхать те: «Эпир кунта мӗн каласа панине кайран Украинӑра пӗлмӗҫ-и» – тет.

**– Пӗлсен мӗн пулать?**

– Пӳрнепе тӗллесе кӑтартӗҫ.

**– Ан хӑра, чӑвашла ҫыратӑп вӗт, никам та ӑнланмӗ.**

Хӗрача ҫавӑнтах киле каяс килнине калать. «Пур пӗрех каятӑп, каникул ҫывхарать, ҫавӑн чухне каятӑп та». Унтан вӑл хӑйсен урамне бомба ӳкнине, икӗ ҫын пурнӑҫӗ татӑлнине, хӑйсен чӑх витине те снаряд ванчӑкӗ лекнине, пӗр чӑхӗ вилнине пӗлтерет. «Кассетӑллӑ бомба», «град» йышши сӑмахсене илтетӗп унран.

**– Хӑрушӑ пулсан та каяс тетӗн-и?**

– Халӗ хӑрушӑ мар. Ун чухне те пирӗн хула ҫине йӑнӑшпа ҫеҫ пенӗ. Вӗсем пирӗн хула ӑҫтине те пӗлмеҫҫӗ.

**– Вӗсем тесе камсене калатӑн?**

– Нацгвардисене ӗнтӗ. Ман юлташсем пурте тенӗ пекех таврӑннӑ. Манӑн та каялла таврӑнас килет.

«Йӑнӑшпа ҫеҫ пенӗ» текен хӗрача хӗрхенӳ туйӑмӗ ҫуратать. Нумаях пулмасть ҫеҫ интернетра йывӑҫ ҫумне ҫыхнӑ ачана амӑшӗ умӗнче чикнине, урам тӑрӑх ҫунакан йытӑ чупса ҫӳренине курса чӗлхесӗр пулса ларнӑскер тин ҫеҫ тӑна кӗрсе пырать темелле. Мӗн чухлӗн вӗсем, чунпа хуҫӑлса-аманса юлнисем.

Арҫын ачасем кил ҫинчен калаҫсах каймаҫҫӗ. Игнатий аттене хупӑрласа илнӗскерсем пӗр-пӗрне пӳлсех шкулта мӗн пулса иртнине каласа параҫҫӗ. Путинӑн ҫуралнӑ кунӗ пулнине, вӑл 62 ҫул тултарнине пӗлтернӗ-мӗн учитель. Физкультура урокӗ те интереслӗ иртнӗ, ҫӗнӗ туссем тупӑннӑ.

**ПӖЧЧЕН МАР**

Килтен икӗ сумкӑпа тухса кайнӑ ҫемьене паян Мӑн Сӗнтӗрте пурӑнакансем май килнӗ таран пулӑшаҫҫӗ. Пӗри пыл ҫӗклесе килет, тепри ӑшӑ япала сӗнет, виҫҫӗмӗшӗ укҫа хурса хӑварать.

Малашлӑхра мӗн кӗтмеллине пӗлмест Елена Коваленко, анчах пурте йӗркеллӗ пуласса шанать. Ура айӗнче вут ҫунмасть. Пӗччен мар вӑл. Йӗри-тавра ӑнланакан, пулӑшас кӑмӑллӑ ҫынсем. Ӗҫ пур. Ачисем вӗренеҫҫӗ, тутӑ. «Пурӑнас, ҫӗр ҫинче ӗҫлес туртӑм пысӑк. Пуҫа усма юрамасть. Ҫакӑн пек ыр ҫынсем хушшинче найкӑшни вырӑнсӑр та. Хамран мӗн килнине пӗтӗмпех тӑвӑп», – терӗ вӑл манпа сывпуллашнӑ май.

Пӳртрен тухас умӗн телефон шӑнкӑравӗ янӑраса кайрӗ. «Манса кайман-ха, часах, часах пыратӑп»,– илтӗнчӗ Елена Анатольевнӑн уҫӑ сасси.

– Мунчана килессе кӗтсе ывӑннӑ иккен,– вӗлтлетсе илчӗ пуҫра. Чӑваш ҫӗрӗнче телей туптӑрах ӗнтӗ ҫак ҫемье.

**Елена НИКОЛАЕВА.**

## ЧӐВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем ҫинче)

**Тунти кун, юпа уйӑхӗн 20-мӗшӗ**
7.10-8.00 Янра, юрӑ! (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня (12+) 15.30-16.00 Ҫӗр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+) 10.30-11.00 Чӗрӗлӗх ҫути. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тӗплӗ калаҫу. (12+) 20.30-21.00 Уйӑхпи юмахӗсем. (6+) 21.30-22.00 Ҫемье ӑшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрӑ! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытлари кун, юпа уйӑхӗн 21-мӗшӗ**
6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кӑмӑл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Тӗплӗ калаҫу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тӑван юрӑ-кӗвӗ. (12+Ҫ) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Ҫемье ӑшши. (12+) 12.05-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрӑ! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалӑх урхамахӗ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ҫӗр сум. (12+) 18.30-19.00 Чӑваш Ен: ҫулсем тата ҫынсем. (12+) 19.30-20.00 На Олимпе. (12+) 20.30-21.00 Уйӑхпи юмахӗсем. (6+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, юпа уйӑхӗн 22-мӗшӗ**
6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кӑмӑл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрӑ вӑчӑри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Чӑваш Ен: ҫулсем тата ҫынсем. (12+) 11.30-12.00 Ҫӗр сум. (12+) 12.05-14.00 Чӗререн тухакан сӑмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (12+) 15.30-16.00 Ачалӑх урхамахӗ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пӗччен мар. (12+) 18.30-19.00 Сирӗн сад-пахча. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тӗплӗ калаҫу. (12+) 20.30-21.00 Открытый регион. (12+)
**Ҫӗнӗ юрӑ** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кӗҫнерни кун, юпа уйӑхӗн 23-мӗшӗ**
